СУВАР 4№ (474) 24.01.2003

# ЭЛМЕТ ЮБИЛЕЙĔ



(Малалли. Пуҫл. 3№.)

Эпĕ Патшалăх Канашĕн кашни сессине тенĕ пекех ҫÿретĕп. Пĕр виҫтăват депутатне тĕлĕкре те куракан пултăм. Вĕсем сесси уҫăлсанах трибуна ҫине е микрофон патне вăркăнаҫҫĕ. Вĕсем ҫĕклекен ыйтусенчен чылайăшне депутатсем сирсе яраҫҫĕ. Анчах та Тутарстан Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ Ф.Х.Мухаметшин, регламента ҫирĕп пăхăнма хăнăхнăскер, кашнине итлет, сăмах парать. Мĕн чухлĕ чăтăмлăх кирлĕ депутатсен пуҫлăхне, мĕн чухлĕ тарăн пĕлмелле унăн сесси йĕркине, чи йывăр калаҫу пуҫлансан та вăл пăлханмасть — ун пеккине курман. Ахальтен мар ăна ҫак ĕҫе хушнă Тутарстан депутачĕсем.

Ҫамрăкла ĕҫе тытăннă. Вунулттă тултарсанах Элметри газпа бензин заводĕнче токарьте ĕҫлеме пуҫланă. Унтан «Альметьевбурнефть» трестăн кантурĕнче шоферта ĕҫленĕ.





Фарид Хайруллович ҫинчен ку материалта тивĕҫлипе сăмах пуҫларăм. Вăл Элметре ҫуралнă. 1947 ҫулта. Хулан чи паллă ҫынни. Питĕ Ҫарта хĕсметре тăнă хыҫҫăн нефтяниксен ҫемйине таврăннă, слесарь ĕҫне тытăннă. 1972 ҫулта Элметре газ промышленноҫĕн техникумне пĕтернĕ. Унтан Ĕпхÿре нефть институтĕнче вĕренсе диплом илнĕ. Инженер-механик.

Парти органĕсем канăҫсăр ҫынсене хăвăрт асăрханă, хăйсен обойми не кĕртсе пынă. 1970 ҫулта ăна ВЛКСМ хула комитечĕн инструкторне илнĕ, ҫапла политикăллă ĕҫ стажĕ пуҫланнă. 1972–1978 ҫулсенче КПСС хула комитечĕн инструкторĕ. Опыт пуянланса пырать. Элметсем ăна пысăкрах та пысăкрах ĕҫ парса пыраҫҫĕ. 1980 ҫултан пуҫласа вăл пĕтĕм Элметшĕн тăрăшма тытăнать. Ăна хула Канашĕн председателĕн заместительне, унтан пĕрремĕш заместительне суйлаҫҫĕ. Тата пилĕк ҫултан парти хула комитечĕн секретарĕ, иккĕмĕш секретарĕ. Каярахпа хула Канашĕн ĕҫтăвком председателĕ.

Фарид Хайруллович биографийĕпе тĕплĕнрех паллашсан ăнлантăм: вăл пĕтĕм опыта, чăтăмлăха Элметре пухнă, пысăк та кăткăс аудиторипе калаҫма хăнăхнă. Ăна, паллах, республикăра асăрханă, малтан суту-илÿ министрне илнĕ, каярахпа ТАССР Министрсен Канашĕн Председателĕн ҫумĕ, ТР Аслă Канашĕн Председателĕ, ТР Премьер-министрĕ. 1998 ҫултанпа Тутарстан Патшалăх Канашне ертсе пырать. Ăна Элмет хулипе районĕн Хисеплĕ гражданинĕн ятне панă.

Хулан пуянлăхĕ — ҫынсем. Элмет паллă ĕҫченсемпе пуян. Кăна Фарид Хайруллович тĕслĕхĕ ҫеҫ ҫирĕплетмест. Акă Ринат Гимаделисламович Галеев — «Татнефть» генеральнăй директорĕ, Тутарстан депутатчĕ, ТР тата РФ тава тивĕҫлĕ нефтяникĕ. Хисеплĕ гражданин. Ку ретре Грицишина Галина Максимовна та шутланать. Чылай пысăк ҫынсем ÿснĕ Элметре. Районта Совет Союзĕн Геройĕсем иккĕн: Никита Евдокимович Токарлинов (Калейкино ялĕ), Мутык Ахметзянович Ахмадуллин (Урсалбаш ялĕ). Элмет хулипе районĕнче Социализмла Ĕҫ Геройĕсем вунсакăр ҫын. Вĕсен ырă тĕслĕхĕсем пуриншĕн те иксĕлми ҫăлкуҫ.

**Александр ИВАНОВ хатĕрленĕ. (Вĕҫĕ пулать.)**

**Сăнÿкерчĕксенче: Тутарстан Республикин Президенчĕ Минтимер Шаймиев Элметри нефть институтĕнче; Фарид Мухаметшин; нефть институчĕ.**

ПУРНĂҪ КАҪАЛĂКĔ

# КАЧАКА ТА СĔТ ЫТЛАРАХ АНТАРАТЬ

Хĕллехи вăхăтра ĕнесем сĕте чакарни паллăха. Мĕн каласан та типĕ утă ешĕл ҫаран курăкĕ мар. Анчах вылăх-чĕрлĕх отраслĕнче пысăк тухăҫ илесси фермăсенче ĕҫлекенсен аллинче. Рацион пуян пулсан шартлама сивĕ кунсенче те продуктивлăх чакни пит сисĕнмест. Ҫакна республикăри Балтаси районĕнчи вылăх-чĕрлĕх пăхакансем, сĕт сăвакансем кулленхи кăтартăвĕсемпе питĕ лайăх ҫирĕплетеҫҫĕ. Районти хуҫалăхсен ĕнисем кашни кун вăтамран 13,14-шар килограмм сĕт параҫҫĕ. Ҫамрăк пăрусен, сыснасен кашни кунхи ÿтхушаслăхĕ те кунта пысăк. Тырпул туса илессипе те ҫĕр ĕҫлекенсем ытти районсенчен юлса пымаҫҫĕ. Апла-тăк, кунта ĕҫе тĕплĕн йĕркелеме, хуҫаланма аван пĕлеҫҫĕ.

Сĕт суса илессипе Атня, Ҫĕлту, Нурлат, Саба, Тюлячи, Арск, Ҫарăмсан районĕсенчи хуҫалăхсем те хĕллехи вăхăтра ҫитĕнÿсем тăваҫҫĕ. Вăтам хуҫалăхсем татах та пур. Тен, ҫавăнпах, республикăпа илсен кашни ĕнерен талăкне вăтамран 6,8-7 килограмм сĕт суса илеҫҫĕ. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан ҫак кăтарту 0,4-1 килограмм ытларах.

Сăт сăвассинчи ҫитĕнÿсем ытти районсенчи хуҫалăхсем кăштах малалла туртăнсан курăмлăрах пулĕччĕҫ. Ҫакна тума нимĕн те кансĕрлемест пек: пур ҫĕрте те вылăх апачĕсене сителĕклĕ хатĕрленĕ. Вĕсене пĕлсе, зоотехника ыйтнă пек ҫеҫ ҫитер. Анчах та Элкел, Ешĕлвар, Камскоустьински, Теччĕ, Тукай, Ютаза, Аксу тата ытти хăш-пĕр районсенче фермăсен продуктивлăхне хĕллехи тапхăрта та ҫуллĕ шайра тытса пырасси ҫине пысăк витĕмлĕхпе пăхмаҫҫĕ куран. Асăннă районсен хуҫалăхĕсенче кашни ĕнерен вăтамран 4,4–5,5 килограмм сĕт суса илеҫҫĕ. Анчах вĕсен хушшинче пĕр ĕнерен 2,2–3,2 килограмм сĕт илекенсем те пур вĕт-ха. Качака ҫулĕнче качакан ни чухлĕ сĕт илсен те юрĕ-ха теҫҫĕ пуль ҫавăн пек хуҫалăхсен зоотехникĕсем. Акă Аксу районнех илер. «Аксубаевское» кооперативлă предприятире талăкра кашни ĕнерен 11-шер килограмм сĕт суса илеҫҫĕ. Ҫак хуҫалăхăн дояркисем кашни ĕнерен ҫулталăкра 4000 килограмм ытла сĕт сăваҫҫĕ. Сулмаклă вĕт кăтартусем. «Ключи», «Сунчелеевский» хуҫалăхсен ҫĕрĕсем аксусеннинчен нимĕнпе те уйрăлса тăмаҫҫĕ. Сĕт тухăҫĕ качаканни евĕр — 2,2–2,3 килограмм ҫеҫ тивет пĕр ĕне пуҫне.

Тухăҫсен уйрăмлăхĕн вăрттăнлăхĕ те ҫиелтех. «Аксубаевское» хуҫалăхра пур ĕҫе те тĕплĕн йĕркелесе пыраҫҫĕ: вылăхсене вăхăтра кирлĕ чухлĕ апат параҫҫĕ, вăхăтра сăваҫҫĕ, ĕҫе зоотехника вĕрентĕвĕ ыйтнă пек илсе пыраҫҫĕ. Юлса пыракан хуҫалăхсенче наука ыйтнисем ҫине алă сулаҫҫĕ. Ҫавăнпах вĕсенче качака антаракан сĕт чухлĕ продукци илеҫҫĕ. Тухăҫ сахал пулнипе фермăсенче ĕҫлекенсене вăхăтра ĕҫ укҫи те парайманҫҫĕ. Ҫак ăнсăрта пулсан ҫынсем фермăсенче пит ĕҫлесшĕнех мар.

Ҫĕр чăмăрĕ ҫийĕн ҫĕнĕ ҫул патваррăн утать. Ял хуҫалăхĕнче вăй хуракансем те унăн йÿтемĕпе тăрăшарах ĕҫлемелле. Пысăк тухăҫ ҫеҫ ытлă ҫитлĕ пурнăҫ парнелет. Тата ял хуҫалăхĕнче фермăсен продукцийĕ хĕллехи вăхăтра «чĕрĕ» укҫа паракан пĕртен-пĕр ҫăлкуҫ.

**Виталий ЕЛТОВ.**



# ҪĔНТЕРÿПЕ МĂНКĂМĂЛЛАНАТПĂР

Январĕн 1-мĕшĕнче «Париж — Дакар» ралли 25-мĕш хут Марсель хулинчен тытăнчĕ. Ҫак тĕнчипе чаплă ăмăртăва Раҫҫейĕн икĕ экипажĕ «КамАЗ-мастер» машинăсемпе вунă ҫула яхăн хутшăнать, темиҫе ҫул пирĕн пилотсем ҫĕнтерÿҫĕсен ятне хăйсенчен ямаҫҫĕ. Хальхинче те Ҫырчалли водителĕсем ăмăртăва тивĕҫлĕ ирттерчĕҫ. Январĕн 19-мĕшĕнче Египетри Шарм-эль-Шейхра ралли вĕҫленчĕ. Владимир Чагинпа Фирдаус Кабиров экипажĕсем «КамАЗ-мастер» машинăсемпе пĕремĕш тата виҫĕмĕш вырăнсене йышăнчĕҫ. Вĕсен хушшине «Татра» машинăпа Андре Де Азеведу бразилец ҫеҫ кĕме пултарчĕ.

Чăн ăмăрту 12 кун тăсăлчĕ. Ҫул-йĕрсĕр, хăйăрлă вырăнсемпе машинăсем 8,5 пин километр чупса тухрĕҫ. 48 экипажран Раҫҫей пилочĕсем тĕнчипе паллă «Мерседес», «Скания», «Рено» модельсене хăйсен хыҫне хăварчĕҫ. Ҫак ҫитĕнÿ, паллах, пурин кăмăлне те савăнăҫпа ҫĕклет. Уйрăмах ҫырчаллисенне, экипажсен ҫемйисене. Фирдаус Кабировăн мăшăрĕ Гульнара сăмахĕсем тăрăх, ăмăрту мĕнле пынине курма телевизор умне пирĕн экипажсен тăванĕсем пĕр хваттере пухăннă. Вĕсем кашни тапхăршăн пăшăрханнă, хăйсен мăшăрĕсен ҫитĕнĕвĕсемшĕн савăннă. Вĕсем кашни кун тапхăр вĕҫленнинчен канăҫ тупайман. Черетлĕ тапхăр ăнăҫлă иртсен ҫеҫ тепри пуҫланиччен кăштах лăпланнă.

— Эпир хамăра хăватлă машинасен экипажĕсен чăн-чăн членĕсем тесе шутлатпăр, — тет Гульнара.

**Виталий ПЕТРОВ.**

# ХЫҪРА — ВЫРМА, МАЛТА — ҪУР АКИ

Аксу районĕнчи «Чулпан» коллективлă хуҫалăх иртнĕ вырмапа кăмăллă: кунта кашни гектартан 51-шер центнер тĕштырă пухса илнĕ. Сахăр кăшманĕн тухăҫĕ те кÿршĕсем умĕнче мухтанмалăх пулчĕ.

**Мидхат ШАКИРЗЯНОВ сăнÿкерчĕкĕнче «Чулпанăн» тĕп инженерĕ Фарид Алимбеков, Рафис Кыямов шофер тата Радиф Шарипов тракторист. Алимбеков 36 ҫул механизаторта ĕҫленĕ, 10 ҫул — тĕп инженер. Халĕ вăл хуҫалăха ҫур акине хатĕрлет.**

